# Поэтăн ĕçĕ-хĕлĕ

...Пирĕн çĕршыв - нумай халăхлă çĕршыв. Пирĕн литература - нумай чĕлхеллĕ литература. Кашни халăх çыравçиех чи малтан хăй чĕлхипе аталанакан çырулăх çинчен шухăшлать ĕнтĕ. Эпĕ те чăваш пуçпа чăваш ллтературипе искусстви çинчен шухăшламасăр пултараймастăп. Маншăн пулсан патриотлăх туйăмĕ кантăк умĕнче ӳсекен йăмраран пуçланать. Пахча хыçĕнчи çеремлĕ сукмак урапа çулĕ çине ертсе тухать, сарлака асфальт шоссе çине, сăмахран, Мускавран ытти çĕршывсене тăсăлмалли автострада çине... Е ак тепĕр тĕслĕх: пĕр-пĕр ялти ятсăр çырма Энĕше е Çавала юхса кĕрет. Çавалĕ Атăла тухать, Атăлĕ пиншер çырма пуçтарса Каспи тинĕсне илсе пырать... Çавнашкал чăваш чĕлхипе тухакан кĕнекесем те: чи малтан чăваш вулаканĕсем валли çырăнаççĕ, унтан вырăс, украин, пăлхар, француз тата ытти чĕлхесем çине куçса тĕнчене саланаççĕ. Апла пулсан, эпир, пысăках мар халăх пулин те, пĕтĕм этемлĕх умĕнче сăмах тытатпăр...

* * *

...Сăлтавĕ кирек ăçта пулин те, пирĕн тишкерӳ ĕçĕ çителĕксĕр пулса пыни паллă. Çыракансем те, вулакансем те, чăваш литературине шкулта вĕрентекенсем те час-часах ӳпкелешсе калаçни илтĕнет. Хаçат-журнал редакцийĕсене, писательсен Союзне, кĕнеке кăларакансем патне те çавăн çинченех çырусем килсе тăраççĕ.

Писателĕн хăй çырнă япала çинчен татăклă сăмах илтес килет: хăйĕн шухăш-кăмăлĕпе, ăсталăхĕпе мĕнле вырăнта тăнине пĕлсе, малалла епле ӳссе пымаллине тавçăрса, пулас çулне-йĕрне уççăн курасшăн çунать вăл. Вулаканăн хăй вуланă кĕнекене лайăххах ăнланса илес килет: романри, калаври, поэмăри геройсен сăнарĕсене, вĕсен ĕçĕсене е ĕмĕрлĕхех юратса, е тӳсме çук питлесе, хăйне кирлине суйлама пĕлесшĕн вăл; хурапа шурра кăна мар, вĕсен хушшинчи куçа

тӳрех куранман шупкарах тӗссене те уйӑрса илме вӗренесшӗн. Вӗрентекенӗн кирек мӗнле кӑткӑс сӑмах ҫаврӑнӑшӗнчен те тӗп шухӑш тӗшне шӗкӗлчесе кӑларма, ӑна шкул ачисене ывӑҫ тупанӗ ҫинчи пек кӑтартма ансатрах меслет тупас килет.

Ҫаксене тума критикӑн пулӑшмалла. Критик пире, хамӑр ӑшра кӑна илӗм-тилӗм ҫутӑ пек палӑракан кӑмӑл-туйӑма ҫиеле кӑларса, ӑс куҫӗпе курма вӗрентмелле; эпир ят хурайман сисӗме хӑй ҫеҫ тупнӑ пӗртен-пӗр тӗллӗ сӑмах-па палӑртма пӗлмелле. Вӑл пур жанрсенче те килти пек пулмалла: хӑш кӗтесре мӗнле япала выртнине, вӑл майлипе майсӑррине, - кирлипе кирлӗ маррине «алӑк уҫса кӗрсенех» курмалла, мӗншӗн тесен ырӑ ҫуртра пӗр пукан вырӑнсӑр ларсан та, пӗр чаршав ҫӳҫи ситрӗлсен те кил-ҫурт тирпейӗ пӑсӑлать, кил хуҫи пуҫтарусӑрри палӑрать.

Кӗскен каласан, пире хамӑртан нумай ҫӳлте тӑракан, сӑмахӗ-шухӑшӗпе пирӗн чун тӗпнех вырнаҫакан критик кирлӗ.

Ӑс-хакӑл хуҫи кирлӗ пире!..

...Чӑваш чӗлхин тимӗр татмалла пулнӑ. Ҫеҫпӗл хӑйччен ҫырнӑ тӑван поэтсене пурне те лайӑх пӗлнӗ, халӑх сӑмахлӑхне калама ҫук тӑрӑшса вӗреннӗ. Анчах вӑл хӑй никам пек те мар. Вӑл, пӗтӗм чун-чӗрипе, пӗтӗм ӑсӗ-халӗпе революционер пулнӑскер, кивӗ кӗвӗллӗ сӑвӑпа ҫӑвар уҫма пултарайман. Унӑн эпир пӗлекен сӑввисем вӑтӑра та ҫитмеҫҫӗ. Анчах кашни сӑвви тенӗ пекех, темине кура, уйрӑм виҫепе ҫырӑннӑ, расна кӑмӑлпа тулнӑ.

Эпир кунта поэт сӑввисен пӗтӗм пӗлтерӗшне мар, вӑл хӑй вӑхӑтӗнчи мӗнле вырӑс поэчӗсенчен вӗренсе пынине мар, унӑн чӑвашла сӑмах ӑсталӑхне ытларах кӑтартса парасшӑн.

1919 ҫулта ҫырнӑ «Иртнӗ самана» сӑввине вӑл ӗлӗкхи ҫичӗ сыпӑклӑ тӳлек виҫепех пуҫлать. Анчах, иккӗмӗшпе тӑваттӑмӗш йӗркесенче

пилĕкшер сыпăка куçса, халиччен пулман рифмăсем тупса, сăвва йăлтах çĕнĕ сăн кĕртет:

Мĕскĕн юлташăм, хăта,
Сухапуç çынни,
Иртсе кайнă вăхăта
Астăватăн-и?..

Паллах, поэт ку сăвва силлабикăпа çырни вăл ун чухне хăйĕн правилине тытайманнине пĕлтермест. Калаçуллă сăвва поэт халăх хушшинче тăтăшах тĕл пулакан виçепе калăпланă. Çав çултах вăл «Атăл юрри» çырать;

Шупашкар çӳл енчен
Кăн-кăвак хум чупать,
Чупнăçем, сикнĕçем шуралать.

Такама кăшкăрать.
Такама вăл чĕнет,
Ирĕке йыхăрса шăхăрать...

Ку вара - тап-таса анапест. Кунта Степан Разин хускатнă Атăл маттурĕсем, çĕкленсе, кĕрлесе, киммисемпе хумсене айăн-çийĕн авăсни туйăнать. Кунта динамика кирлĕ пулнă. Поэт ăна тупнă. Икĕ çултан вăл çак кĕвве тепре аса илет. Анчах вара вăл çав виçене тăтăшах виçшер йĕркен касса татса пырать: виçĕ йĕркине те пĕр пек рифмăпа çирĕплетсе, сăвва пушшех витĕмлĕ тăвать:

Шăршлă каç йывăрри,
Кивĕ çĕр кăкăрри
Вут хыпса, кĕл пулса вĕçтĕр-и...

Çитменнине, тăршшĕпех тенĕ пек **вĕçтĕр-и, çипĕр-и, пултăр-и, илтĕр-и** майлă глаголсем, сăвва пĕр шăнăр çине тирсе, унăн энергине чăмăртаса, хытарса, чăн та тимĕр татмалла тăваççĕ.

Поэтӑн анапестпа ҫырнӑ сӑввисенчен тепри каллех расна. Вӑл сарлака: вӑл, ӗмӗрсем урлӑ курӑнакан иртнӗ сӑнсене хальхи тӳперен пӑхса, малашлӑх тавракурӑмне вӗҫӗ-хӗррисӗр аслӑлатать:

Катаран каҫ килсен, **каҫхи кунӑн** мӗлки
Уйсене ыйхӑпа хупласан,
Йӗркерен-йӗркерен тӗрлӗ шухӑш йӗрки
Пуҫӑма пуҫтарна пуҫласан -
Ӗлӗкхи ӗмӗрсен ӗмӗлки-кӗлетки
Куҫӑма курӑнать аякран.
Ӗлӗкхи ӗмӗрсен ӗмӗлки хушшинче
Чӑваш ҫӗрӗ мана курӑнать:
Ман ҫӗршыв хӗрлӗ юнлӑ хӗрес ҫумӗнче
Ҫакӑнса, ҫыхӑнса тӑраять.
Кӑмрӑкланнӑ, асаплӑ чӑваш чӗринчен
Юн тумлать, юн тумлать - хӗрлӗ юн.
Чӑваш пуҫӗ ҫинче хуп-хура сивӗ кун
Шӑхӑрса ахӑрать пур енчен...
Ҫӗр иртсен, - ирхи кун хӗвелтухӑҫӗнчен
Тӗнчене уяртса, сывлӑма
Шӑрҫа пек шӑратса кӗмӗл саслӑн килсен, -
Ман юратнӑ ҫӗршыв вилӗмрен чӗрӗлни,
Вӑл асаплӑ хӗрес ҫумӗнчен ҫӑлӑнни
Пур енчен те сават куҫӑма.

Ҫеҫпӗлӗн сӑвӑсерен ҫӗнӗ ритм, ҫӗнӗ виҫе. «Чӑваш ачи-не», «Ҫӗн Кун Аки», «Ахаха асӑнса», «Чӑваш! Чӑваш!..», «Инҫе ҫинҫе уйра уяр...» сӑвӑсене пӗр виҫепех - ямбпах - ҫырнӑ-ҫке темелле. Анчах миҫе тӗрлӗ ямб унта! Мӗнле авкаламасть ӑна поэт! Вӑл - чӗлхе хуҫи. Ӑна нихӑҫан та ӑнсӑртран рифмӑшӑн ҫакланнӑ сӑмах аяккалла пӑрса яраймасть.

Акӑ «Чӑваш ачине».

Кунта вăл тăвата картлă ямба, тăватшар йĕркен тăратса, çĕре пĕр харăс тапса хăваракан салтаксем пек уттарса пырать:

...Кăвар чĕре!  Кăвар чĕлхеллĕ
Чăваш ачи, сассуна пар!
Тухсам кунта, сана кĕтеççĕ.
Килсем! Килсем! Эс пур, çук мар...

Чăваш чĕлхи  ăсти! Кăварлă
Чĕрӳ сан сиснĕ чăннине.
Шанатăп. Ĕмĕте усратăп:
Эс килĕн. Килĕн тĕнчене!

Пĕрремĕшпе виççĕмĕш йĕркесем рифмăланмаççĕ те, анчах вăл сисĕнмест. Сăвă пĕр ĕмĕтпе, чăваш поэзийĕ Шупашкар - Кавал - Çĕрпӳ -Етĕрне урлă тĕнчене тухас ĕмĕтпе, тытăнса тăрать. «Эс килĕн» тет те поэт пăнчă лартать. Унтан вăл, шухăш вĕçне тупнă пек, «Килĕн тĕнчене!» тесе, савăнса кăшкăрса ярать. Кунта Çеçпĕлĕн тăван халăхшăн хыпса çуннă чĕрипе «Интернационал кĕперне» куракан ăсĕ-хакăлĕ, пĕр кĕвве пĕрлешсе, килĕшӳллĕ гармони пулса тухни палăрать.

Çав сăвва пирĕн кашни çырма пуçлакан сăвăçах ответ парать. Ку - традици пулса кайрĕ тесен те юрать. Çав сăнлăхсемпех çыраççĕ: **Кăвар чĕре, чĕлхе ăсти** т. ыт. те. Анчах пĕрре каланă сăмаха ялан кала пуçласан, сăмах кивелет, витмИ пулать, якалать, мăкалать темелле. Хăш чухне вăл пароди майлă та пулса тухать...

Пирĕн çĕнĕ поэзи анине пĕр чарăнмасăр шăваракан тейĕр юхăм вăл - вырăс поэзийĕн иксĕлми тинĕсĕ. Çав тинĕсрен чи малтан Пушкинăн пархатарлă хумĕсем, çине-çинех хӳсе килсе, пире хамăр чĕлхен хăватне, ун тӳсĕмлĕхне ĕнентереççĕ. Эпир Пушкинпа чăвашла калаçса пăхрăмăр. Пушкин халь пĕтĕм чăваш халăхĕпе калаçать. Пушкина эпир хамăр -тума тытăннă çĕнĕ, социализмлă культура керменĕн чи кирлĕ чулĕ

тетпĕр: вăл унăн сиккеленми тĕреклĕ никĕсне те выртмалла, таçтан курăнакан çӳллĕ тăррине те эрешлесе илемлетмелле.

Вырăс чĕлхи пире вырăс литературипе çеç мар, Совет Союзĕнчи пĕтĕм тăванла халăхсен литературипе те паллаштарать. Ытти çĕршывсенчи халăхсен литературине те эпир халлĕхе вырăсла куçарнă тăрăхах пĕлсе пыратпăр. Халлĕхе, тетпĕр, мĕншĕн тесен пирĕн çĕнĕрен ӳсес литераторсем, тăван чĕлхепе вырăс чĕлхисĕр пуçне, ытти чĕлхесене те çине тăрсах вĕренессĕн туйăнать. Байрон, Шекспир, Гете, Данте, Руставели, Низами, Навои - çакнашкал шухăш улăпĕсене хăйсен чĕлхинчен тӳрех куçарнине нимĕн те çитес çук. Халлĕхе эпир хамăр чĕлхене çывăх чĕлхепе çыракан сăвăçсене те вырăслах вулатпăр, вырăсларан куçаратпăр. Ку çитменлĕхе туякансем çук мар пирĕн...

...Нимĕнле тĕрĕс тытса пынă сăвă виçи те хăй тĕллĕн поэзи пулса тăрайм-асть-ха. Вăл тĕрленĕ чух пир кармалли каркăç е картин çырнă чух кирлĕ хашак кăна. Унта мĕнле тĕрĕ тĕрлесси, мĕнле сăрăпала сăрлассии ăстинчен килет. Савăнтарас, хурлантарас, çиллентерес е чуна çĕклентерес тет-и ăста - кунта вара тĕрлĕ тĕслĕ çипе е сăрра пĕр-пĕринпе вилĕшӳллĕ хурса пыма пĕлни кирлĕ.

Анчах паха тĕрĕшĕн тирпейлĕ каркăç, ытарайми картиншăн çирĕп, хитре хашак тăвасси те пуртăпа пура пуракан платник ĕçĕ кăна мар. Хăшпĕр пуçтарусăр сăвăсем пĕр вăхăтра хăлхана çĕртнĕ музыкăри сумбура аса илтереççĕ. Халь пирĕн пур искусствăра та пуçтаруллăрах, тирпейлĕрех стиль çĕнтерсе пырать...

...Пирĕн сăвăçсем «хитре» сăмахсен тыткăнне лекеççĕ. Çакăнтан вара **шурă розăсем, кĕмĕл сывлăмсем, ылтăн керменсем** сиксе тухаççĕ. Ун пек сăмахсем хăйсем тĕллĕнех илемлĕ теççĕ пулас ӳркев пуснă рифмăçăсем. Паранкă çулçи роза мар ĕнтĕ, ун çинчен юрă хума хĕнтерех. Анчах хумалла. Хире лартнă йĕкел те янтă кĕмĕл сывлăм мар. Ун илемĕ те куçа тăпра витĕрех курăнмасть. Анчах курмалла! Нимле

ылтăн кермен те, нимле роза пахчи те çук-ха Чăваш çĕршывĕнче. Чĕрĕ туйăмсăр, шăрçа пек тире-тире тухнă «хитре» сăмахсем пуш чечек пек е хут чечек пек кăна курăнаççĕ. Чăн илемлĕхрен чĕрĕ сĕткен тапса тăмалла…

Поэзи чĕлхи çинчен калаçнă чух пире Н. И. Ашмарин профессор çырса илнĕ пĕр юрă аса килет:

Кали-калами купăсна
Эс вырăсла каласан,
Эп чăвашла ташлăттăм...

Вырăс кĕввине чăваш ташшипе хирĕçтерни-ши ку? Çук. Пĕр тытăннă ĕçе тĕплĕ, ăста тума хушать ку юрă. Чĕлхене пăсакан поэтсем умĕнче ку чухнехи вулакан çав кĕвĕпех ак çапла юрлама та пултарать:

Пĕли-пĕлми чĕлхепе
Эс чăвашла çырсассăн,
Эп вырăсла вулăттăм...

Эпир пурте вырăсла вулама вĕренесшĕн тăрăшатпăр. Анчах чăвашсем валли чăвашла **вулама** тесе çырнă сăвăсене **чăвашлах** туса çитересчĕ.

Пирĕнпе пĕр ўсĕмри вырăс поэчĕ Александр Твардовский хăйшĕн чи ытрă ят, чи пысăк чап тесе акă мĕне шутлать: «Ан тив, пĕр-пĕр вулакан ман кĕнекене тыттăр та ак çапла калатăр, - тет вăл: -

Сăвă ак, сăвă пулин те -
Пĕтĕмпех ăнланмалла,
Пĕтĕмпех ку вырăсла...»

Эпир, хамăршăн пулсан, поэтăн кайранхи йеркинчи пĕр сăмахне кăна улăштарма пултаратпăр.

Пĕтĕмпех ку **чăвашла! -**
тетĕр пирĕн вулакан. (Сисмесĕрех, сăвăлла калаçма пуçларăмăр пулас.)

Пирĕн поэтсене халăх сăмахлăхне, уйрăмах халăх юррисене вĕренни çитмест. Мĕнле-мĕнле виçеллĕ, мĕнле танлаштаруллă, мĕнле сăн-сăпатлă, рифмăллă сăвăсем çук унта!

**Алран** кайми аки-сухи,

**Асран** кайми ати-ани...

Ак сире ямб та, малти рифма та. «Нарспири» икĕ йĕрке аса килет:

Хĕрлĕ- пурçăн тутăрне

Хĕрле çавăрса çыхать.

Ак сире янравлă, тулли рифма:

Вуник куккук, пĕр карăш -

Авăтаççĕ пĕр харăс.

Ак сире ик-виç сăмахпа туса панă пĕр-пĕр турхан (феодал) сăнарĕ:

Асаттеçĕм атлас тăхăннă,

Арки-çанни çĕртен сĕтĕрнет.

Акă **туй-туй** тесен чун çĕкленнине, ватă çын та çамрăкланнине кăтартакан сăнлăхсем:

Туя килтĕм туясăр,

Мухмăрларăм сăрасăр.

Тен, халăх юррисенчи параллелизм хальхи поэзие вырнаçаймĕ. Юрлама мар, вулама çырнă сюжетлă сăвăсенче вăл пушшех те юравлă мар-и, тен. «Нарспире» те вăл тӳлекрех сыпăксенче кăна, геройсен шалти драмине кăтартас умĕнхи увертюра пек юписанисенче кăна тĕл пулать. Поэмăри ĕçсем пĕтĕм чун-чĕрене хускатса хăвăрт пулса пынă тĕлсенче поэт çав меслетпе сайрарах çырать. Анчах кунта эпир халăх хăй яланах кура тăран, илте тăран конкретлă япаласенченех чăн-чăн поэзи тунине, çав сăнлăхсемпех калама çук пысăк, философиллĕ шухăш калама пултарнине астутарса хăварасшăн.

Акă эпир пĕлмен халăх юрăçи юрласа хăварнă тĕлĕнмелле пĕр çавра:

Хура вăрман варринче
Нихçан типми кӳлĕ пур,
Çавра кӳлĕ варринче
Ылтăн юпа пур, теççĕ,
Ылтăн юпа тăрринче
Шур кулюкка пур, теççĕ:
Шур кулюкка - ман савни,
Ылтăн юпа - тур çырни,
Çавра кӳлĕ - ман куççуль,
Хура вăрман - ман тăшман.

Юрра юптарса юрланă. Унта вăрманĕ те вăрман мар, юпи те юпа мар. Хура вăрман вăл - **çынна çын - кашкăр теекен** харпăрлăх тĕнчи**.**

Ылтăн юпи вăл - хĕрарăма чемсĕр выльăх пек сутăн илекен пуянсен мулĕ. Шур кулюкка (кăвакарчăн) вăл - юрăçăн таса юратăвĕ, çитме пулта-райман ĕмĕчĕ.

Мĕнле поэзи!

Паллах, халь пирĕн вулакансем, **шур кулюкка** тесен, чи малтан Пикассо çырнă ăслă та лăпкă куçлă мир кăвакарчăнне кураççĕ. **Вăрман** тесен, çĕнĕ этем ирĕкĕпе çеçенхирте çĕнĕрен ӳссе кашласа ларакан юманлăх е хырлăх шавне илтеççĕ. Кӳлĕ тесен, этем ирĕкĕпе çĕнĕрен тулса тарăнланакан шывсене кураççĕ. Çавăнпа та халăх поэзийĕнчен тӳрех илнĕ танлаштарусем ялан ăнăçлă пулма пултараймаççĕ. Пирĕн поэтсем колхозниксене, мăн кĕрӳ такмакĕсенчи майлă, ылтăн-кĕмĕл пукансем çине те лартса пăхрĕç, тарай тутрисем те çакса яркаларĕç. Ун пек туни - чи çăмăл меслет, анчах - суя меслет.

Эпир поэтсене, пĕтĕм халăх сăмахлăхне вĕренсе çитсен те, çынсем такăрлатнă çулпа çеç пыма мар, хăйсен çулне тупмса чĕнетпĕр. Çăмăл

вуламакан, чуна час пырса тивекен сăвăсем йывăррăн çырăнаççĕ, вăраххăн ӳсеççĕ. Эпир йывăрлăхшăн та мар, вăрахлăхшăн та мар: эпир вĕсене часрах çĕнтересчĕ тетпĕр. Пярĕн нумай теройлă поэмăсем вулас килет. Вĕсенче янтă ярлык çакса янă автомат-этемсем мар, хăйсем тĕллĕн пĕр утăм та ярса пусайман тăм **кĕлетке, тăхлан куçсем** мар, тулли пурнăçпа пурăнакан, шухăшлама пултаракан чĕрĕ чĕреллĕ çынсем пулччăрччĕ.

Эпир рабочи класс умĕнче парăмлă. Эпир хамăр интеллигенцие пĕлместпĕр. Чăвашран промышленноçри ĕç меслетне çĕнетекенсем, конструкторсем, мнженерсем, тухтăрсем, генералсем, профессорсем тухрĕç. Вĕсем хушшинче патшалăх премие лауреачĕсем пур. Эпир çаплах Кĕлпук сухалĕпе Элтиван чĕлĕмĕнчен уйрăлаймастпăр.

Мĕн каласси ĕнтĕ: ялтаи тухнă çын яла ытларах пĕлет. Цех тăрăх блокнотпа çӳренипех рабочисен сăвăçи пулаймăн. Çавăнпа чăваш рабочисем хушшинчи çырма тытăнакансене те астуса тăмалла, тирпейлĕн пăхса çитĕнтермелле.

Пирĕн ĕç йывăр та пархатарлă. Çулăмăр илçе те илĕртӳллĕ. Çивĕч те витĕмлĕ сăмах - пулас культура никĕсĕ. Çавна шута илсен, пирĕн поэзире çеç мар, пĕтĕм литературăра кăна та мар, чĕлхен пур фронтĕнче те калама çук пысăк, анчах çине тăрсах тумалли ĕçсем тухса тăраççĕ. Вăл ĕçсене эпир - сăвăçсемпе калавçăсем, кĕнекеçĕсемпе хаçатçăсем, чĕлхеçĕсемпе этнографсем, историксемпе философсем - пĕр-пĕринпе таччăн хутшăнса ĕçлесен çеç тума пултаратпăр.

...Чăн ĕнтĕ, пирĕн «пур енĕпе» те пултаракансем те тухкалаççĕ: ун йышши халăх вара сăввиие те сăвăлать, калавне те калать, камитне те кăтартать, тишкерме те тиркемест. Аçта пушă вырăн пур, вăл çавна «тултармах» тăрăшать. Мĕн тата епле тултарса лартни тепĕр чух никамах та интереслентермест. Авторĕн интересĕ те гонорарне илсенех сӳнсе ларать. Унашкал ялан хатĕр, пурне те ăста «универсалсем»

иимĕнле критери çук çĕрте çеç кун курма пултараççĕ. Чăваш литературинче çав критери çителĕклĕ тесе калама халичченех май килмест-ха. Вăйлă традициллĕ пысăк литературăсем, пуринчен ытла - вырăс литератури, пирĕншĕн тĕслĕх пулса тăмалла. Çав тӳперен пăхсан, пирĕн хăшпĕр тухăçлă сăмах арманĕсем авăрни вĕренчĕкле хăтланнă çыркаланчăк пек çеç туйăнать. Вырăсла çыракан вăтам кăна писатель те час-часах пирĕн ятлă-сумлă авторсенех вăтантарма пултарать. Хăйсен ăсталăхне ӳстерме тăрăшман, хăйсене хăйсем пулса çитнĕ художник тесе шутлакан ăслă пуçсем çавăн пек чухне кӳренсе те илеççĕ, чăркăшма та пăхаççĕ. Унашкал вушар чĕресене ӳкĕте кĕртме йывăр. Пирĕн шанчăк - çамрăксем...

...Сăвăпа музыка - уйрăлми йĕкĕреш. Сăвăсăр юрă çук. Проза инçетрен перекен шултра йĕтреллĕ тупă пек пулсан, сăвă вăл - тăшман ури çинех таптаса пыракан юланут. Прозăна сехечĕ-сехечĕпе меллĕн килте ларса е талăкĕ-талăкĕпе каютăра-купере çул тытса, кана-кана «пуç тавра» шухăшласа кавлетĕн пулсан, сăвва - ăш хыпнă çын часрах çăл шывне выртса ĕçнĕ пек каçса кайсах сыпатăн. Каллех калатпăр: пĕрне те тиркеместпĕр, пĕринчен те пистересшĕн мар эпир. Анчах кашни жанрăн хăйĕн уйрăмĕ пур. Проза сюжетпа, пурнăç анлăхĕпе, шухăшпа çын кăмăлне çавăрать пулсан, поэзин (лирикăлла поэзин) ытарайми енĕ - сăнлăх, шалти туйăм, уйрăм пахалăхĕ сăмахсем кĕвĕллĕн янăрани пулса тăрать. Прозаик вăрăммăн каламалли шу-хăшра поэтăн кĕскен каласа пама пĕлмелле.

...Чăваш чĕлхине тĕпчевçĕсем тĕрĕк чĕлхисен йышне кĕртеççĕ пулин те, авалтан вырăссемпе юнашар пурăнса, эпир çав халăх калаçăвĕн манерĕсене (ударенине, интонацине) йышăнмасăр пултарайман. Силлабо-тоникăлла сăвă йĕркине пула пирĕн хальхи поэтсем тĕнчери мĕнпур халăх поэзийĕн шедеврĕсене хăйсен виçипех куçарма пултараççĕ. Вырăс классикĕсемсĕр пуçне çитес çулсенче, ман

шутпа, Гомер поэмисене, Дантепе Руставели, Низамипе Навои ҫырнисене, Лонгфеллăн «Гаяватипе» карел-финсен «Кале-валине» пĕтĕмĕшпех куҫарса кăлармалла. Халăх культури ҫинчен калаҫатпăр пулсан, чăваш чĕлхи литературăпа наука тата философи чĕлхи пулчĕ тетпĕр пулсан, эпир пур халăхсен культурине те хамăрăн тумасăр малалла ўсме пултараймастпăр. Унсăрăн пирĕн калаҫусем деклараци ҫеҫ пулса юлĕҫ...

...Чăваш поэзийĕшĕн ҫĕнĕ япала - гшрĕн хула лирики аталанса пырать. Студент, чулҫă, монтер, экскаватор, транспортер. Иванов палăкĕ, нумай хутлă ҫуртсем... Темĕн ҫинчен те ҫыраççĕ ҫамрăксем. Кунта пирĕн традици пуянах мар-ха. Ҫур ĕмĕр ытла ял ҫинчен сăвăланă поэтсем пире хулана, хула ҫыннин кăмăлне чăваш чĕлхипе ҫавăрса илме вĕрентеймерĕҫ. Ҫул-йĕр ҫĕнĕрен хывма тивет.

Тăван чĕлхен мĕнпур хăвачĕпе усă курма та вĕренеймен-ха эпир. Кунта, ватти-яшшине уйăрмасăрах, ҫакна каламалла: тўсме ҫук чухăн, пĕр пек сăмах ҫаврăнăшсем пуҫа минретсе ҫитереççĕ! Н. И. Ашмаринăн **Чăваш сăмахĕсен кĕнекинче** хĕрĕх ултă пин ытла сăмах пулсан, пирĕн чылай авторсем ҫав пуянлăхăн вуннăмĕш пайне те хăйсен туса йышăнайман-ха. Ку поэзире те, прозăра та, драматургире те ҫавах. Паллах, илемлĕ ҫырулăх ăсти тиек мар, вăл сăмахсене, тути-масине пĕлмесĕрех, ҫырса илнипе пысăк ĕҫех тăваймĕ. Чĕлхен шалти саккунĕсене тĕпчеме, хамăрпа пĕр ҫемьеллĕ ытти чĕлхесем мĕнле улшăнса пынине сăнасан ҫеҫ пуплеве хăюллăн авкалама, тепĕр чух «кивĕ» сăмахах чĕртсе ҫĕнĕ ăнлава пĕлтерекен тума пулать. Ку тĕлĕшрен писательсене чĕлхеҫĕсемпе пĕрлешсе ĕҫлени питĕ пулăшнă пулĕччĕ...

...Ҫеҫпĕлĕн чăвашла ҫырнă сăввисем кашниех шедевр пулса тăраççĕ. Вĕсем вăтăра яхăн кăна сыхланса юлнă. Анчах ăҫта кăна, кам кăна асăнмасть-ши вĕсене! Чĕлхеҫĕсем, чăваш поэтикине тĕпчекенсем,

сăвăçсем, политикăлла статья авторĕсем, журналистсем, вĕренекенсемпе вĕренте-кенсем, колхоз клубĕнче сăвă калакансем е килтех вулама хавас çынсем - пурте хăйсем валли тĕрĕс шухăш, чĕре хĕмĕ, чун ăшши тупаççĕ çав вăтăр сăвăра. Йыхрав, цитата, эпиграф пулса, ăçта-ăçта çитмерĕç çав сăвăсен сыпăкĕсем! Кăвар чĕре - Çеçпĕлтен уйрăлми сăнлăх. Анчах вăл тата çав кăвар хĕрӳлĕхĕ м ĕ н ш ĕ н кирлине уççăн тавçăрса илнĕ пысăк ăслă, нумай пĕлекен çын пулнă. Унăн вĕри чĕри хăватлă шухăшĕпе килĕшсе пĕр кĕвĕллĕн тапнă. Çавăнпа кăна вăл вăхăтлă та витĕмле сăмах тупма пултарнă.

Чăваш халăх чĕрĕлĕхĕпе, революци хум-шавĕпе пĕрле Çеçпĕлĕн туслăхпа юрату сăввисем те пур. Вĕсем Çеçпĕле эпир халиччен пĕлмен енчен кăтартса параççĕ. Вĕсенче тĕлĕнмелле çутă чун, таса кăмăл палăрать! Туслашсассăн - тупăкчен, юратсассăн - юрличчен тенĕ пек, Çеçпĕл унта та хăйне евĕр максималист: пулсан пултăр пĕр пĕтĕм, тулли туйăм; нимĕнле çурма йĕкĕлтевлĕ лĕп шыв та ăша кантарма пултараймасть.

...Чун, çутă ĕмĕтпе тулса,
Чĕтрет - кĕç юрласа ярассăн...

Чăнах та-мĕн: юрличчен! Каллĕ-маллĕ пăхмасăр, халь эпир тишкерсе вуласан та, куçарасса та ĕмĕтленмесĕр çырнă чун-чĕре сăмахĕсем Çеçпĕлĕн сарлака мар, анчах тĕпсĕр тарăн çăлкуçне чи тăрă, чи таса тумламсем пулса кĕрсе юлĕç.

Максималист терĕмĕр... Çăлăннă чăваш халăхĕн çырулăхĕ, пĕтĕм культури хальтен халь сарлака тĕнчене тухасса, чаплă та мухтавлă сăвăçсем, кĕнекеçĕсем çитĕнессе ĕненнĕ çын, коммунизма - темиçе самана хушши хаяртан хаяр кĕрешсе те мар, чакса та мар, тăхтаса та маневр туса мар - паян-ыран пек вĕриленсе васканă çын, вăл туслăхпа юратура та çав хăвăртлăхпа туллилĕхех курасшăн çуннă. Анчах экономикăн пиртен килмен саккунĕсем çĕршыва çип çапнă пек тӳп-тӳрĕ

юпаллă çулпала çеç пыртармарĕç, çынсен тăнне-пуçне те кĕтмен çĕртен урăх ориентир парса нумай улăштарчĕç, çав улшăнăва ăнланса илейменнисене вăрахлăха амантса ĕçрен кăларчĕç е пачах ĕмĕчĕсене татрĕç. Çавна пулах Çеçпĕлĕн те хăшпĕр сăввисем йывăр шухăша яраççĕ. Туслăхпа юрату сăввисенче те, çутă ĕмĕтсемпе пĕрлех, хурлăх та сисĕнет. Этем чĕри шăхличĕ мар: пĕрре картнă чĕлĕхсене пуса-пуса ĕмĕрех çав кĕвве калаттарма çук ăна. Юрату та куçран куçа пăхса йăл-йăл кулса çеç лармалли шыльăк мар. Çеçпĕлĕн юратăвĕ - пысăк художникăн ĕмĕрхи трагедийĕ. Ку - малашнехи тĕпчевçĕсемшĕн, романçăсемшĕн хăйне уйрăм тема.

Анчах поэт шухăшĕн, ĕмĕчĕн, пĕтĕм чун хавалĕн тĕп вăрри - аслă ирĕклĕх сывлăшĕпе тасалнă, тутă, сĕткенлĕ, пархатарлă вăрлăх. Çавна вăл Çĕн Кун Аки кăпăшлатнă чăваш уй-хирне пуракĕ тĕпне пĕр пĕрчĕ юлмиччен тараватлăн акса хăварчĕ.

Александр Блок калашле:

Каçарăпăр ун хурлхăпе, -<br>
Ăна чун кĕртекенĕ çав-и?<br>
Вăл ĕненет çын ырлăхне,<br>
Вăл - çутă ирĕклĕх уявĕ!

...Поэзие илсен, яланхи пекех уçă та тӳрĕ кăмăлпа янăра пуçламă Митта Ваçлейĕн сасси кунран-кун тĕрекленсе пыратчĕ. Поэтăмăр тăван сăмахăн тутине пĕлсе, ăна перекетлĕн тыткаласа ĕçлетчĕ. Унăн çырса пĕтереймен «Тайăр» поэма сыпăкĕсем, «Авалхи садăмра», «Тав сана», «Пит маттур-çке Иванов бульварĕ» тата ытти нумаях та мар сăввисем юлашки вăхăтри темĕн чухлĕ шупка сăвă-юрă çинче чăн-чăн ĕнчĕ пĕрчисем пек йăлтăртатса тăраççĕ. Халăх чĕлхи, наци сăн-сăпачĕ, сахал сăмахпа нумай калама пĕлни, таса кăмăл, вĕри чĕре таппи, тарăн шухăш - акă мĕн туять вулакан Митта сăввисенче. Шăратса хывнă йĕркесем, сăвăсерен тĕрлĕ кĕвĕ, тĕрлĕ çавра темелле, тулли рифма - çак пурте

хӑй тӗллӗн тухса пынӑ пек, «чун тарӗпе» ӗҫлени сисӗнет, мӗншӗн тесен сӑввӑн та тӗп шухӑшӗ, шалти тасалӑхӗ кӑмӑла ҫавӑрать. Мӗнле виҫелӗх тата, туйӑм виҫелӗхӗ! Эстетика картинчен тухса каякан, «пӗвӗ-сийӗ ун тарлайӑ урипе лӗпки таран» тенӗ натуралмзмла ӳкерчӗксем ҫук унта.

Пирӗн линютиппа ӗҫлекеноем, йӗркере пӗр саспалли йӑ-нӑш пулсан та, пӗтӗм йӗркине ҫӗнӗрен шӑратаҫҫӗ. Тепӗр чух вӗсен, хӑйсем йӑнӑшнипе е корректор каярах асӑрханипе, темиҫе хут та шӑратма тивет. Ӳркенмеҫҫӗ, ӗҫлеҫҫӗ. Хальхи чылай сӑвва вулатӑн та - мӗн чухлӗ унта ҫӗнӗрен шӑратса хывмалли йӗрке! Анчах Миттан ак ҫак сӑввинче пӗр саспалли те пулин улӑштарма пулать-ши?

Авалхи садӑмра, астӑватӑн пулсан,
Эсӗ лартнӑ пӗр йывӑҫ пур ман.
Тӑвӑл ҫапрӗ ӑна, хупӑрларӗ тусан,
Анчах унӑн тымарӗ хӑрман.

Кил, пӗрле тӑприне кӑпкалар,
Шӑварар, суранне имҫамлар.
Чӗрӗл, туслӑх, ҫулҫӑ кӑлар:
Сансӑр пирӗн пахча хӑтлӑ мар.

Ҫакнашкал чӑн асталӑх. «Чӗрӗл, туслӑх» хыҫҫӑн пӗр сыпӑк ҫитмен пек те кунта - вырӑнлӑ пауза, ӑна «гармоние алгебрӑпа тӗрӗслекен» хытса кайнӑ кӗҫҫе чунлӑ сивӗ педант ҫеҫ ҫитменлӗх теме пултарать. Пахча ҫинчен кӑна ҫырнӑ пек, анчах ҫыннӑн мӗнле туйӑмӗ ҫук ҫак сӑвӑра! Тӗрӗс туслӑх, пурнӑҫри йывӑр трагеди, хӗрхӳ асаилӳ, хӑйне улӑштарман, сутман тӳрӗлӗх, именӳллӗ ӗненӳ, каллех пӗччен юласран шикленни (кил, пӗрле тӑприне кӑпкалар...), ҫутӑ шанчӑк, тӳссе курнӑ ҫыннӑн чӑн-чӑн оптимизмӗ. Ман шутпа, ҫак сӑвва, ним ӳстермесӗрех, Лермонтовӑн чи лайӑх сӑввисемпе танлаштарма пулать.

...Митта Васлейĕ мĕн кĕçĕнрен Çеçпĕлĕн революци факелĕ пек çунса тăракан чĕри çутатнă Чĕрĕлĕх çулĕ çинелле туртăнать. Малтанласа, ялтан тухнă ытти ачасем пекех, вăл ансăр та тумхахлă сукмакпа пырать. Такăнка-лать те каллех сиксе тăрать. Малалла утма пăрахмасть.

Çеçпĕл пĕтĕм чĕрĕлĕхĕн хăватлă паллине тăван чĕлхере курать. Ĕмĕрсем тăршшĕ «çичĕ ютсем» туланă, тапăннă, мăшкăлланă, анчах тĕп тăвайман чăваш чĕлхи Çеçпĕле тĕлĕнтерсе ярать, шанчăк парать. Митта та, пирĕн ӳсĕмри пур çамрăк сăвăç пекех, Çеçпĕлĕн çав ĕмĕтне ăша илет.

Шанап, чĕлхеçĕм, ĕненетĕп
Сан чи тивлетлĕ ĕмĕтне.
Çунатла пултăм - вĕçĕнетĕп
Ĕмĕт сĕткенĕ çĕнетме.

Çакăнтан пуçласа тăван чĕлхе теми (чĕлхе-фетиш мар, революципе культура хĕçпăшалĕ пулмалли чĕлхе теми) Митта поэзине çине-çинех кĕрсе пырать. Тăван чĕлхепе ĕçлейменни, чăвашла çырайманни, çырма май пулманни уншăн калама çук пысăк инкек пулса тăрать.

Шарланкă  тăраймасть кĕрлевсĕр,
Вĕçмесĕр пурнаймасть хăлат.
Çырман поэт чăн-чăн телейсĕр,
Вăл, пулă пек, типсе юлать.

Çапла калать поэт патша самани сăнчăрласа тĕп тунă Тайăр Тимкки çинчен. Çак ăша çунтаракан сăмахсем хăй тӳссе курнă çыннăн чĕринчен кăна хайрăлса тухма пултарнă. Анчах шанчăк çухалман, ĕмĕт татăлман.

Ĕшеннисемшĕн çул çинче
Эс - шанчăк çăлтăрĕ ялан.
Тискер тăманлă каçсенче
Йыхравлă чан пек янăран.

Поэт, ӗлӗкех ӑста тӑлмач пулнӑскер, юлашки ҫулӗсенче те чӑваш сӑввине чылай ӑнӑҫлӑ куҫарупа пуйтарчӗ. Уйрӑммӑнах манӑн вӑл Лонгфеллӑн «Гайаваттин» сыпӑкне ӑнӑҫлӑ куҫарнине палӑртса хӑварас килет. Ҫав пысӑк та ытарайми япалана пирӗн пӗтӗмӗшпех чӑвашлатасси поэтсен хисеплӗ ӗҫӗ пулмалла. Тинкererех пӑхсан, унта чӑваш халӑхӗн авалхи йӑлисене ҫывӑх этнографилле детальсем те нумай. Митта ӑна хӑех куҫарас кӑмӑлпа пурӑнатчӗ. Ӗлкӗреймерӗ. Вӑл хӑварнӑ паха сыпӑк тӗслӗх пулмалла...

* * *

...Икӗ сехет хушши ытла пынӑ Иванов каҫӗ хупӑнсан, хӑй ӗмӗрӗнче ӑна-кӑна пайтах активнӗ пӗр чӑваш манран ҫапла ыйтрӗ: «Нарспи аппа пулман пулсан, мӗн курнӑ пулӑттӑмӑр-ши эпир?» - терӗ. Эпӗ сасартӑк ним калама аптраса тӑтӑм. Мускавран Шупашкара ҫити тӑтӑшах ҫав ыйтӑва аса илсе пытӑм. Чӑнах та, камӑн чунне ҫӗклесе яман икӗ хура шӑрҫа пек куҫлӑ, ҫӑмӑл ал-ураллӑ, ахӑлтатса кулакан ҫирӗп ҫын Нарспи? Мӗнле поэт, драматург, композитор, художник парӑмлӑ мар-ши ун умӗнче? Мӗнле тӗпчевҫӗ ӑнланса илесшӗн тӑрӑшман-ши унӑн таса чунне, вӗри чӗрине, хӑюллӑ шухӑшне?

Пуринчен ытла «Нарспие» паларнӑ Ивановӑн генийӗ (ним ӳстермесӗрех - генийӗ!) чӑваш культурин шӑпине Яковлев пекех, - анчах хӑйне майлӑ, хӑй вӑхӑтенче, - пӗтӗм малашлӑхшӑн татса панӑ теме пултаратпӑр эпир. Ку таранччен упранса юлнӑ сӑвви-пэмисене поэт пурне те ҫулталӑк ҫурӑ е ик ҫул хушшинче ҫырнӑ. Ун чух вӑл вунҫиччӗре-вунсаккӑрта кӑна пулнӑ. Ку пире йӑлтах тӗлӗнтерсе ярать. Виҫ пин йӗрке сӑвӑра ӗлӗкхи чӑваш пурнӑҫӗн пӗтӗм энциклопедийӗ курӑнать. Гоголь, Пушкин ҫинчен каланӑ пек, ку - чӑнах та, аравасӑр, нимӗнле калӑпа шанӑҫайми япала…

Кашни халӑх поэзийӗ - пӗр тинӗс. Тинӗсе тӗрлӗрен шыв-шур ҫитсе хутшӑнать: ҫеҫен хир тарӑх тикӗссӗн юхакан сарлака ҫырма та, ту-чакӑл

хушшинчен тухса чулсем урлă ыткăнакан кăпăклă шарлак та, çĕртен тапакан вĕри шыв та, лĕпреххи те, сулăнни те…

Тинĕссем вĕçĕ-хĕррисĕр океана пĕрлешеççĕ. Хальхи саманари халăхсен поэзийĕн шалти тинĕссем çук. Вĕсем темле çырана та татса каяççĕ, пĕтĕм этемлĕх поэзийĕн океанне тухма çул тупаççех.

* * *

Пирĕн çĕршывра çав çул - хăватлă вырăс чĕлхи. Чăнах та, мĕн пĕлĕттĕмĕр-ши эпир унсăрăн хамăрăн юмахри пек çĕршывăмăр çинчен? Кам туйтарĕччĕ-ши çĕнĕрен çуралнă йăхсен тан шыв пек тапакан таланчĕсене?

«...Литература халăхпа халăха çăмăлтарах, лайăхрах паллаштарать», - тенĕччĕ Максим Гюрький хăйĕн çирĕм пилĕк çул ĕлĕкрех Шупашкара янă çырăвĕнче. Çавăнтах вăл Совет Союзĕнче кĕнеке куçарас ĕç ниçтинчен те анлăрах сарăлса пынине асăрхаттарнăччĕ. Унтан вара пирĕн çĕршывăн пурнăçĕ паллайми улшăнса лайăхланчĕ, унăн пĕтĕм тĕнчери авторитечĕ калама çук ӳссе тĕрекленчĕ. Баренц тинĕсĕнчен пуçласа Хура тинĕсе çити, Сарă тинĕсрен Адриатика таран çĕнĕ пурнăçшăн çĕкленнĕ халăхсем пĕр-пĕринпе вырăс чĕлхи урлă паллашаççĕ.

Ăçта халăх - унта поэзи. Поэзи вăл - кăмăл çуначĕ, самана чĕрин таппи, ĕмĕр чĕри те канăçсăр сисĕм-туйăм. Çав виçĕ япалана пĕрлештернĕ сăмах ăсталăхĕ пиншер çул хушши этем юнне ăшăтать, кăмăлне çĕклет, ăстăнне хастарлатать. Унăн асамлă вăйĕ пĕр чĕлхерен тепĕр чĕлхене куçарсан та - ăста куçарсан! - упранатех…Çавнашкал Пушкин куçарнă Гете сăвви, Иванов куçарнă Лермонтов поэми.

Чăваш поэзине илсен, çакна калас килет: пирĕн нумай çул хушши тăсăлнă тавлашура Çеçпĕл шкулĕн силлабо-тоникăлла йĕрки çиеле тухса пыни палăрчĕ. Тавлашу пĕтмен-ха. Силлабика пире урăх нимĕнле шедевр та параймĕ тесе калама пултараймастпăр. Халăх юрри-

такмакĕсене манăҫа хăварни хамăра хамăр ҫаратни пулнă пулĕччĕ. Вĕсене тĕплĕ тишкерсе вĕренменни хамăр ӳссе тухнă йăва ҫине ҫаврăнса сурни пулнă пулĕччĕ. Халăх хушшинчи Г. Ф. Федоров пек, Кашкăр Микули пек юрăҫă-такмакҫăсене хисепе илменни е вĕсене «хутпĕлменлĕхе пĕтерес!» тенĕ майлă ҫине тăрсах ямбпа хорее вĕрентни, вĕсен ирĕклĕ сассине ҫав виҫесемпе калăпласа лартма хăтланни йĕре-кулă евĕрлĕ ĕҫ пулнă пулĕччĕ.

Анчах чĕлхен пуласлăхĕ ҫинчен, поэзин малашнехи культури ҫинчен калаҫнă чухне эпир М. Ф. Федоровпа К. В. Иванова тивĕҫсĕре хăвармасăрах чи малтан Ҫеҫпĕле аса илетпĕр. Ҫеҫпĕл шкулĕ пире тĕнче поэзине хамăрăн тума, хамăра та тĕнчене тухма мел пачĕ...

Пирĕн кăвар чĕреллĕ поэт, хамăра ҫеҫ мар, ытти халăхсене те вут-хĕм парса, вĕсен культурине кĕрсе пыни - пирĕншĕн ытарайми савăнăҫ. Ку пире, чăвашла ҫыракансене, тăван чĕлхемĕр чăннипех те - Шелепи каларăшле - ҫу-лăмлă-кăварлă, тӳсĕмлĕ-сисĕмлĕ иккенне туйтарать.

...Элкер сасси асăмра ĕнер илтнĕ пекех янăрать-ха:

Чăваш ĕҫҫынни!
Чăнах та вара эс сахал чăтрăн-и?..

Сăвăҫă ятарласа ҫав кун валли ҫырнă «Паян» сăввине пĕтĕм чунĕпе ҫĕкленсе вуларĕ. Хавхаланса тейĕччĕҫ хальхи хаҫат хыпарҫисем. Ун чухне ҫав сăмах илтĕнсех каймастчĕ-ха.

Ҫавăнта илтсе юлнă йĕркесем мана хамăр халăх кун-ҫулĕн этаплă тапхăрĕсем ҫинчен шухăшланă вăхăтра яланах аса килетчĕҫ.

Паян эс историн мăн ҫулĕ ҫинче
Умна та, хыҫна та пăхса тĕлĕнен...

Ҫĕнĕ виҫеллĕ сăвăпа, тĕрĕс сăмах майлашăвĕпе ҫырса кăтарт-ха ҫав пысăк шухăша ҫапла кĕскен!

Элкер... Мускавра тухса тăнă «Ĕҫлекенсен сасси» ятлă журналта курсаттăм эпĕ чи малтан ҫав хушамата. 1923 ҫулта пулчĕ пулас ку.

Поэтăн «Икĕ тĕнче» ятлă сăвви мана пысăк шухăша янăччĕ. Халĕ тухса тăракан томĕсенче курмарăм-ха эпĕ ăна. Тем çитмен пекех туйăнчĕ. Хуçин хăйĕн кăмăлĕ, хăйĕн ирĕкĕ.

Астумастăп ĕнтĕ: те Хусантах, те Шупашкара куçсан тин пуçласа вуларăм эпĕ «Хурçă карап» сăвва. Анчах Атăл çыранĕпе çак йĕркесене касса татса утăмлани хальхи пекех асра!

Кăвак тинĕсре шавлакан хумсем урлă
Шăвать пĕр карап тăп çыран еннелле.
Вăл ишнĕ шыв çулĕ пит тертлĕ, хĕн-хурлă,
Нумай вăл кĕрешрĕ умри хĕнпеле...

Тискер çил кашлатăр, сив тинĕс шавлатăр,
Нимрен те шнкленмĕ çак хурçă карап!
Манми капитанăн çулне çухатмасăр,
Çитес çĕре çитĕ вăл - пулмĕ асап!

Ленин вилни çулталăк тулнă тĕле çырнă ăна сăвăçăмăр. Ман шутпа, хамăр поэзи историйĕнче çак 28 йĕркеллĕ сăвă - чи хăватлă, чи тарăн шухăшлă, чи ăста калăпланă сăвăсенчен пĕри. Кисренми çӳллĕ палăк пек çĕкленет вăл малашлăх тӳпинелле. Вăл - нумай ĕмĕр хушши пиçĕхсе таса хурçăн янăра пуçланă тӳсĕмлĕ чăваш сăмахĕсенчен! Ленина лартнă хăйне евĕрлĕ пĕр палăк. Хăйĕн поэтика çĕнĕлĕхĕпе вăл Çеçпĕл теорине чăнлать. Тинкеререх пăхсан, Çеçпĕл шкулĕнче Элкерĕн çӳллĕ маччаллă, пысăк та çутă хăйĕн класĕ пурри палăрать. Çеçпĕлĕн «Хурçă шанчăкĕпе» Элкерĕн «Хурçă карапĕ», маншăн пулсан, пĕр вĕркĕчпе вĕрĕнсе, пĕр вучахра шăраннă чăннипех тимĕр татмалли сăмах хĕçĕсем. Çеçпĕлĕн амфибрахийĕ кĕскерех йĕркеллĕ, пĕр-пĕрин çумне тачăраххăн хĕсĕнсе, пĕр-пĕрин «чавсине сиссе» утăмлакан салтаксем пек, Элкерĕн амфибрахийĕ, - темине кура, - сарлака, мăнаçлă, аславлă тейĕттĕм эпĕ...

Хаклă юлташсем! Йăмăксемпе шăллăмсем!

Сирĕн канашлăвăр Çеçпĕл 70 çул тултарас умĕн иртет. Сирĕн чылайăшăртан кĕçĕнтерех, хăшăртан, тен, кăшт аслăрах çав кăвар чĕре халăхăмăрăн чĕрĕлĕхĕшĕн хыпса çунса кайрĕ. **Чĕрĕлĕх** сăмаха вăл **Революципе** пĕр тан пысăк саспаллипе çырнă. Наци чĕрĕлĕхĕ уншăн чи малтан тăван чĕлхе чĕрĕлĕхĕ пулнă, чĕлхе чĕрĕлĕхĕ - наци чĕрĕлĕхĕ. Халăхăн çĕршер, пиншер çулхи асап-тĕсепне каялла çавранса пăхса ăша çунтаракан сăмахсемпе иртнине сăнласа-ӳкерсе, Интернационал кĕперĕ витĕр, ун урлă кармашса, вăл таçти малтине те яр-уççăн курса тăнă. «Хулпуççипе кăвак пĕлĕте перĕнсе» çĕкленес çĕнĕ чăвашăн чĕлхи тимĕр татасса ĕненнĕ.

Акă ĕнтĕ çав вилĕмсĕр сăнарпа - Интернационал кĕперĕпе - вĕçленекен «Çĕн Кун Аки» сăвва хĕрĕх те пĕр чĕлхепе куçарчĕç. Хĕрĕх те пĕр! Чăвашра ку авалтан аоамлă хисеп пулнă. Арăмçăсем, çутçанталăка сăнакан аслă ватăсем хĕрĕх те пĕр сиплĕ курăк пĕлнĕ.

«Чăваш чĕлхи тимĕр татрĕ!» - теме пултаратпăр эпир паян. Çеçпĕле куçаракансем хушшинче пысăк культурăллă халăхсен пысăк поэчĕсем пур. Руставелипе Низами, Пушкинпа Шевченко, Райниспа Донелайтис, Рудакипе Навои, Шафарикпа Мицкевич, Ботевпа Петефи, Тукайпа Хетагуров тата ыттисен чĕлхипе те сасă парать паян Çеçпĕл.

Ку сире, çамрăксене, çĕнĕ шанчăк кӳртсе, ăмăрт çунат хушмалла! Хăвăртан малтан йывăр тертпе çул хывнă тăванăрсене сума сăвăр. Пĕрне-пĕри те хисеплĕр, туслă пурăнăр. Ман ĕмĕт ячĕпе, ăсталăх ячĕпе сиксе тавлашăр, тупăшăр, ăмăртăр, çухаран çавăрса тытасса çитĕр, анчах урăх çĕре лексенех пĕрне-пĕри алă парăр. Ан манăр: эсир пĕр аслă самана çыннисем, пĕр халăх йышĕ, пĕр класс сасси. Поэзи хурал пӳрчĕ мар, унта карланкăпа çĕнтереймĕн. Çеçпĕл сăвăçсем патне çырнă çырăвĕсенче «чăваш чĕлхи ячĕпе пĕр пулар» тет. Ку нумая пĕлтерекен япала. Этем ĕмĕр пурăнаймасть. Хăрнă йывăç вырăнне çĕнĕ хунав

шăтать. Пĕр йăннă сасă вырăнне вуннă янраса кайтăрччĕ! Паллах, вăхăтсăр татăлнă Çеçпĕл пек, Константан Иванов пек талантсене вуншар сăвăçпа та, çĕршерпе те саплаштарма çук. Тепĕр тесен тата талант тени - яланах хăйне евĕрлĕ пĕртен-пĕр япала. Мĕн вăл талант? Атте-аннепе çутçанталăк панă тивлет. «Турă хĕлхемĕ» тенĕ авалхисем. Чăн-чăн пултарулăх çав хĕлхемсĕр пулма пултараймасть. Пĕрне вăл сăвăç е художник, теприне музыкçă е тухтăр, виççĕмĕшне, калăпăр, философ е тĕпчевçĕ пулма хистет пулĕ. Çав хистеве çын хăйшĕн вăхăтра сиссе илни паха. Ма тесен пирĕн хушăра тепĕр чух хăйсене хăйсем сая яракан графомансем те сахал мар тĕл пулаççĕ.

Истори али питĕ вĕтĕ куçлă: кайран-кайран хывăхĕпе тĕшши палăратех. Анчах вăхăтлăха, тĕрлĕ сăлтава пула, ним талантсăр çынсемех кĕнеке хыççăн кĕнеке кăлараççĕ, пĕрне-пĕри мухтаççĕ, пуçпа мар, чавсапа ытларах ĕçлеççĕ. Эсир пурте вулакан çынсем. Тĕллесе кăтартмасăрах палласа илме пултаратăр ун йышшисене. Сыхланăр çавăн пек меслетсенчен! Анваскăр! Вĕренĕр! Вулăр, сăнăр, тĕпчĕр, шырăр.

Эсир наци малашлăхĕшĕн сăмах тытмалли çынсем. «Халăхсене вĕсен литературипе виçеççĕ», - тенĕ Виктор Гюго. Чăваша малашне сирĕнпе виçĕç. Сулмаклăрах пусасчĕ сирĕн çав тараса çине! Çеçпĕл хăйĕн саманишĕн, хăйĕн çулне кура, питĕ нумай пĕлнĕ. Вăл, чăвашсăр пуçне, ун чухнехи вырăспа украина литературин пĕтĕм юхăмĕсене, ушкăнĕсене тĕпчесе, ăнланса илме тăрăшнă. Астăвăр-ха «Шухăшласа кăларнă куççене» ятлă сăввине. Вырăсла çырнă япала. Хальхи тӳперен пăхсан, ытла вăйлах та мар сăввă. Анчах халаллани шухăша ярать: «Манăн ытарайми имажинизм поэзине». Пĕлнĕ, сăнанă, тишкернĕ. Вăл юхăм (имажинизм) çапах та паллă вырăн йышăннă ун чух, ун курланкинчен пысăк поэт Сергей Есенин шĕкĕлченсе тухнă-çке!

Ĕнер кунта яшсене пăртак ӳпкелесе те илчĕç: чăваш пурнăçĕнчен ытла инçе пăрăнаççĕ, таçта Нефертити, Пенелопăсем тарамах çул тытаççĕ имĕш пирĕн тухъяллă музăсем. Мана хама ку питех шиклентермест. Пирĕн поэзи хальхи нумай енлĕ, кăткăс интеллигенци чĕлхипе те калаçа пуçларĕ. Ку ĕнтĕ тĕнче культурине, этемлĕхĕн ку таранчченхи ăстăн мулне хамăрлатас сăлтавпа пулса пыракан япала. Унсăр май та килмест пулĕ. Чăннипех те Ин-тернационал кĕперĕ айне тăнă халăх ытти халăхсен пĕтĕм ăстăнне, илемлĕ ăсталăхне хăйĕн тумасăр нихăçан та вĕсемпе танлашаймĕ. Эпĕ тахçанхи шухăшах калатăп. Пирĕн опера театрĕ «Евгений Онегина», пур ытти классикăри оперăсене те **чăвашла** лартмасăр нихăçан та наци театрĕ пулас çук. Халлĕхе, мăшкăл пулин те, уйрăм арисене е романссене чăвашла юрлани те çук-ха. Ак кунта та сирĕн, çамрăк поэтсен, ĕçлемелли питĕ нумай. Эстрада пирки те çавнах каламалла.

Тепĕр манăн тахçаяхи шухăш: чĕлхе вĕренĕр! Тĕнче поэзине оригиналран куçарас ĕçе хутшăнма хатĕр пулăр. Эпĕ вунă çул ытла пăлхар чĕлхи вĕренетĕп. Ыр-и, усал-и, хама кура, вăй çитнине куçаркалатăп. Урăх чĕлхе вĕренме, тен, вăхăтăм та, сывлăхăм та çитеймĕ. Шанчăк -сирте, яш-кĕрĕм, хĕрупраç!..

1951—1960